Г. С. АТАМАНОВ

# ЮМĂÇА, ТĔШМĔШЕ АН ĔНЕН, ЧИРЛЕСЕН — ТУХТĂР ПАТНЕ КАЙ

ЧĂВАШ АССР ГОСУДАРСТВО ИЗДАТЕЛЬСТВИ
ШУПАШКАР—1960

*Одобрено к печати научно-атеистической секцией Чувашского отделения Всесоюзного общества по распространению политических и научных знаний.*

**Георгий Степанович Атаманов**

**СОВЕТСКАЯ МЕДИЦИНА В БОРЬБЕ СО ЗНАХАРСТВОМ, РЕЛИГИОЗНЫМИ ПРЕДРАССУДКАМИ И СУЕВЕРИЯМИ**

На чувашском языке

Оформление Н. Н. Кроневальда

Редактор **И. Н. Никифоров** Технич. редактор **Н. С. Степанов**
Худож. редактор **В. Ф. Солодовников** Корректор **Р. И. Белова**

НГ 00200 Сдано в набор 4. VII. 1960 г. Подп. к печати 18.VIII.1960 г.
Формат $84\times108/_{32}$. Объем 1,64 печ. л. Уч. изд. 1,5 л. Заказ 1038.
Изд. № 267/60. Тираж 2000 экз. Цена 50 коп., 1 янв. 1961 г. цена 5 к.

*Типография № 1 Министерства культуры Чувашской АССР*

*г. Чебоксары, Володарского, 5.*

Социализмлă строй пирĕн çĕршывра ĕççыннисен пурнăçне татти-сыпписĕр лайăхлатса пыма, совет халăхĕн культурăллă шайне нихçанхинчен те ытларах хăпартма тата унăн ăс-тăнпа шухăш-кăмăл хăватне чечеклентерме кирлĕ пур майсене те туса пачĕ. Совет çыннисен пурлăхырлăх интересĕсене тата культура тĕлĕшĕнчи ыйтăвĕсене ытларах туллин тивĕçтересси Коммунистсен партипе Совет правительствин чи паха та кирлĕ законĕ пулса тăрать. Коммунистсен партипе Совет правительстви халăх ырлăхĕшĕн кĕрешнине уççăн кăтартса паракан тĕслĕхсенчен пĕри Совет Союзĕнче халăх сывлăхне сыхлас ĕçре тунă чаплă çитĕнӳсем пулса тăраççĕ.

Совет Союзĕнче пуриншĕн те тивĕçлĕ, квалификацилĕ медицина пулăшăвĕпе пĕтĕм халăх укçа тӳлемесĕрех усă курать. Сывлăха сыхлас çĕре яракан укçа-тенкĕ хисепĕ çултан-çул ӳссе пырать. 1955 çулта сывлăха сыхлас çĕре тата физкультура валли 31,2 миллиард тенкĕ расхутланă, 1956 çулта — 35,5 миллиард тенкĕ, 1957 çулта — 37,6 миллиард тенкĕ.

Халăх хуçалăхне, çав шутра халăх сывлăхне сыхлас ĕçе аталантармалли калама çук пысăк программăна черетсĕр пухăннă КПСС XXI съездĕнче йышăннă.

СССР халăх хуçалăхне 1959—1965 çулсенче аталантармалли контроллĕ цифрăсем тăрăх, халăх сывлăхне сыхлама, физкультурăпа спорт ĕçне аталантарма тата медицина промышленноçне хывнă укçа-тенкĕ кăна 25 миллиард тенкĕ ытларах пăхса хăварнă. Çакă вăл 1959—1965 çулсенче, малтанхи çичĕ çул хушшинчипе танлаштарсан, çĕнĕ строительствăсен шучĕпе хутшăнакан вырăнсен хисепне больницăсенче икĕ хут, ача яслисенче

иккĕ çурă хут ытларах ӳстерме май парать. 1965 çулта витаминсене 6 хут ытларах, медицина инструменчĕсене, приборĕсене, 1958 çулхипе танлаштарсан, 2—2,5 хут тата антибиотиксене 3,7 хут ытларах туса кăларăççĕ. Халăх сывлăхне сыхлас, физкультурăпа спорт ĕçне аталантарас çĕре яракан мĕнпур укçа-тенкĕ хисепĕ вара 350 миллиард тенкĕрен те ытларах шутланать.

Рабочисемпе служащисен реальнăй ĕç укçи ӳссе пыни, пенсисене пысăклатни, колхозниксен тупăшĕсем хăпарса пыни, обществăллă апатлану сарăлса тата лайăхланса пыни, пурăнмалли çурт-йĕрсем тăвасси сарăлса пыни, физкультурăпа спорт массăллăн аталанни — çаксем пурте сывлăха çирĕплетме, чир-чĕртен малтанах сыхланма пулăшаççĕ. Сăмахран, ООН комиссийĕ илсе кăтартнă цифрăсенчен СССР-та халăх вилесси кирек хăш урăх çĕршывринчен те сахалтараххи курăннă. Ача-пăча вилесси Совет Союзĕнче 1957 çулта, 1913 çулхипе танлаштарсан, 6,1 хут чакнă.

Çын ĕмĕрĕ Совет Союзĕнчи пек вăрăм пулни тĕнчере урăх ниçта та çук. Патша Российинче çын ĕмĕрĕ вăтамран 30—33 çул шутланнă пулсан, халь вăл 67 çултан та ытларах тăсăлать.

Пирĕн çĕршывра çын ĕмĕрне тăсассишĕн пыракан кĕрешӳре совет медицини тунă çитĕнӳсем пысăк вырăн йышăнса тăраççĕ. СССР-та сикекен чылай чирсене, сăмахран, çаксене: чумана, халере, хура чеччене йăлтах пĕтерсе хунă, сивчир тытни вара сайра хутра кăна тĕл пулкалать. Филатов академик ĕçĕсем ĕмĕрлĕхех суккăр пулса юлнă тесе шутланă çынсен куçĕсене уçса, вĕсене куракан тума май пачĕç. Совет хирургĕсем — Бакулев, Мешалкин, Петровский, Вишневский, Углов — тата вĕсен вĕренекенĕсем (çав шутра пирĕн янташсем те — Шупашкар хирургĕсем — И. М. Кузнецов тата П. Е. Ермолаев), чĕрепе ӳпкене питĕ ăста операцисем туса, чĕре тата ӳпке чирĕпе йывăр аптракан сывмар çынсене нумайăшне чиперех çӳрекен тăваççĕ. Сыватакан учрежденисен практикинче нумай çĕнĕ медикаментсемпе — пенициллинпа, стрептомицинпа, биомицинпа, синтомицинпа — тата ытти йышши антибиотиксемпе: фтивазидпа, кортизонпа тата ытти сиплĕ эмелсемпе усă курма тытăнни тĕрлĕрен чирсемпе кĕрешес ĕçре медицина работникĕсен аллине хăватлă хĕçпăшал пачĕ.

Капитализмлă çĕршывсенче эпир пачах урăхла йĕрке

куратпăр, унта государство бюджечĕн пысăкрах пайĕ вăрçа хатĕрленес çĕре каять, çавна пула халăхăн пурнăç шайĕ çултан-çул чакса пырать. Америкăри влаçри çынсем хăйсем калана тăрăх, йывăр чирлесе ӳксен те, США-ра пурăнакан халăхăн 4/5 пайĕ киле врач пĕр хут пырса кайнине те тӳлеме вăй çитерейместь. Медицина пулăшăвĕ панăшăн тӳлесси США-ра 1958 çул тĕлне, 20 çул ĕлĕкрех пулнипе танлаштарсан, 85 процент ӳснĕ. 1957 çулта больницăра выртнăшăн тӳлесси, 1936 çулхипе танлаштарсан, тăватă хут хаклăрах пулнă. Операци тутарма больницăра 18—20 кун хушши выртнăшăн пациент 1.200—1.300 доллар тӳлет. Çакăнпа пĕрлех тата çакна та шута илес пулать: США-ра пурăнакан çемьесен тăваттăмĕш пайĕн çулталăкри тупăшĕ 2000 доллара та çитеймест. Паллах, йĕркеллĕ сываласси çав çемьесемшĕн чăннипех юхăнса юлассине пĕлтерет те ĕнтĕ. Италире кăткăс операци тунăшăн тӳлемелли хак хресчен икçĕр кун хушшинче илекен тупăшпа танлашать.

Капиталистсем, ĕççыннисене пĕр хĕрхенмесĕр эксплуатацилекенскерсем, вĕсен сывлăхĕпе пурнăçĕ çинчен аса та илмеççĕ, мĕншĕн тесен ĕçлейми пулнă рабочисем вырăнне ĕçсĕр çӳрекен миллионлă çарта çĕнĕ ĕç аллисем яланах тупăнассине вĕсем пĕлеççĕ-çке. Капитал влаçĕ пусмăрлăх, эксплуатаци тата ултав çинче никĕсленсе тăрать. Капиталистсем ĕççыннисене хутла вĕренме, пĕлӳ илме памаççĕ, вара пур майсемпе те тĕне ĕнентерме, тĕшмĕшлĕхе сарма тăрăшаççĕ. Вĕсем ĕççыннисен тăннепуçне минретме, вĕсене хăйсен класĕн интересĕсемшĕн кĕрешессинчен сирсе яма тăрмаланаççĕ. Сăмахран, мĕнпур капитализмлă çĕршывсенче, «цивилизациленнĕ» тенскерсенче, çав шутрах США-ра та, авалхи ĕмĕрсен юлашкийĕ шутланакан вĕрӳ-суру йăли халĕ те анлăн сарăлнă. Америкăра тухса тăракан хаçатсенче çакнашкал пĕлтерӳсем курма пулать: «Енчен те эсир ĕçсĕр тăрса юлтăр пулсан, ман патa пырăр, эпĕ, асамçă хăвачĕпе усă курса, сире ĕçе тепĕр хут илмелле тăватăп». Америка хĕрарăмĕсенчен вунă миллион ытла хăйсен пĕчĕк сумкисенче мулкач ура лапписене чиксе çӳреççĕ, вĕсен шучĕпе, вăл телей кӳрет имĕш. Англире, США-ри пекех, гостиницăсенчи пӳлĕмсене, пăрахутсенчи каютăсене номерленĕ чухне вĕсен хуçисем вунвиçĕ хисепе сиктерсе хăвараççĕ, мĕншĕн тесен «инкек-синкек кӳрекен» номерлĕ пӳлĕме е каютăна пурпĕрех никам та йышăнас çук.

Революцичченхи Российăра та гостиницăсенче вунвиççĕмĕш номерсем пулман.

Америкăра тухса тăракан медицина хаçат-журналĕсем пĕлтернĕ тăрăх, США-ра паян кунччченех 200 пинрен кая мар юмăç, 85 пин астролог — этем шăпине «малтанах пĕлекен» çын пур. США государство органĕсем ирĕк панипе юмăçсен шкулĕсем ĕçлеççĕ, унта вĕренекенсене стипенди тӳлеме США правительстви укçа-тенкĕ уйăрса парать. Унта çын кирек мĕнле чирпе чирлесен те, çурăм шăмминчен мăлатукпа шаккаса сыватма вĕрентеççĕ,— çакăнтанах курăнать ĕнтĕ çав «шкулсен» сăн-сăпачĕ. Кирек хăш чиртен те сывалма пулăшаççĕ тесе шутлакан «вăрттăн хăватлă» тĕрлĕ йышши амулетсемпе, медальонсемпе анлăн усă кураççĕ.

Капитализмлă çĕршывсенче астрологи — этемĕн пулас кун-çулне çăлтăрсем тăрăх каласа парасси — питĕ сарăлнă.

Хальхи вăхăтра, астрологи чăннипех те суя тата тăрлавсăр пулнине пăхмасăрах, буржуалла журналсемпе хаçатсенче астрологи ыйтăвĕсемпе çыракан уйрăм пайсем пур, унта ултавçă астрологсем тĕнчери лару-тăру мĕнле пулассине, биржăри ăнăçлă ĕçсене тата ытти япаласене малтанах каласа параççĕ. Астрологи буржуазие çын пурнăçĕ общество аталанăвĕн законĕсенчен мар, пĕлĕт çинчи çăлтăрсем епле майлă вырнаçса тăнинчен килет, тесе халăха ĕнентерме кирлĕ.

Капитализмлă çĕршывсенче спиритизм та — харкам хăй шăпине пĕлме пулăшаççĕ тесе шутлакан сывлăшсене ĕненесси — питĕ сарăлнă. Сăмахран, США-ра спиритизм енĕпе ĕçлекен 75 пин çынна шута илнĕ. Ку çеç те мар-ха, США-ра юмăçсемпе астрологсене официальнăй майпах йышăнтарма та хăтланса пăхнă. Акă, 1945 çулта конгресăн хăшпĕр членĕсем государство службинче тăракан федеральнăй астролог должноçне çирĕплетесси çинчен ыйту тăратнă.

Патша Российинче те тĕшмĕшсене, суя паллăсене ĕненесси анлăн сарăлнă пулнă. Ĕмĕрсем хушши тĕттĕмлĕхре пурăннă чухăн хресченсем пĕлӳ, квалификациллĕ медицина пулăшăвĕ илме пултарайманни юмăçăн, вĕрӳ-суру ĕçĕн тĕрлĕ формисене анлăн сарălма пулăшнă. Вĕрӳ-суру инкек-синкекне, Н. А. Некрасов «Мороз — красный нос» поэмăра аван çырса кăтартнă.

Тĕшмĕшсемпе тем те пĕр суя йăласене аталанма

СССР-та условисем çук. Çапах та кивĕ тĕнчерен юлнă йăласем чылай тĕреклĕ-ха. Пирĕн çĕршывра та паян кунччен кивĕ тĕнчен тĕшмĕшĕсенчен тасалса çитеймен, вĕрӳ-суру сиплĕхне, юмăçа ĕненекен çынсем тĕл пулаççĕ.

Çак пĕчĕк кĕнеке умĕнче вулакансене вĕрӳ-суру сиплĕхĕн сиенлĕхĕпе, тĕн тĕшмĕшĕсен айванлăхĕпе тата сиенлĕхĕпе паллаштарас тĕллев тăнă та ĕнтĕ.

## ЮМĂÇРАН СИЕН КĂНА ÇУРАТАН

Пирĕн çĕршывра мĕнпур халăх квалификациллĕ медицина пулăшăвĕпе укçа тӳлемесĕрех усă курать пулин те, хăшпĕр çĕрте халĕ те юмăççсем тĕл пулаççĕ-ха. Юмăçа ĕненесси, вĕсем патне чир-чĕртен сывалас тĕлĕшпе çӳрени иртнĕ саманаран юлнă киревсĕр йăласенчен пĕри пулса тăрать. Юмăççем çынна «сыватнă» чух медицинăллă пĕлӳсемпе усă курмаççĕ, пули-пулми сăмаха хăлхана чикекен, пĕлӳ çитмен çынсене муталаççĕ кăна. Вĕрӳ-суру йăлисене халăх медицинипе пăтраштарма кирлĕ мар. Халăх медицинин меслечĕсем паян кунччен те хăшпĕр ĕнчен усăллă пулма пултараççĕ, мĕншĕн тесен нумай чухне вăл халăх вăрах вăхăт хушши сăнаса тăнинчен пуçланса кайнă хаклă йышши сиплĕ эмелсемпе, майсемпе усă курать.

Халăх медицини тата вĕрӳ-суру йĕрки ăçтан пуçланса кайнă-ха? Чи авалхи обществăри çынсен малтанлăха тĕне ĕненесси те, юмăçĕсем те пулман, çынсем чир-чĕр çинчен пĕлмен. Ун чухнехи çынсем йăлтах çутçанталăкпа унăн стихийăллă вăйĕсене пăхăнса пурăннă. Тĕнчери кирек хăш япала та вĕсене тĕлĕнтернĕ. Вĕсем аçа-çиçĕмрен, çĕр чĕтренинчен, çумăрсăр уяр çанталăкран, сивĕ кунçĕртен тата ытти хăрушă явленисенчен сехĕрленнĕ. Хăй пурнăçĕнче асăрханă явленисем те — тĕлĕк, çын аташса калаçни, чир-чĕр, вилĕм — çынна тĕлĕнтернĕ. Чир-чĕр мĕнрен пуçланса кайнине малтан çынсем пĕлмен, пурăна-киле вĕсем шăнса пăсăлнипе, апат çиессипе çыхăнса тăракан чирсене асăрхаса палăртакан пулнă, усăллă е сиенлĕ ӳсентăрансене уйăрма вĕреннĕ, пĕр йышшисем

хăстарнине, теприсем вар-хырăма çемçетнине асăрханă. Сунара çӳресси аталанса пынă май çынсем тăтăшах суранланнă, аманнă. Вĕсем суранран юн тухнине, тепĕр чухне юн юхнипе вилнине сăнанă, шăмă тавраш мăкăлтаннине, хуçăлнине курнă, юн каяссине чакарма, сурансене тӳрлетме тăрăшнă. Çапла ĕнтĕ, апат-çимĕç шыранă май, сунара, пулла çӳренĕ май ӳсентăрана чĕрчун тĕнчинчен тухнă нумай тĕрлĕ сиплĕ япаласем пуçланса кайнă, çынсем вĕсемпе усă курнă. Çынсене тĕрлĕ чир-чĕртен сыватассине нумай çулсем хушши куллен-кун сăнаса пыни темиçе ăрăвăн опычĕсене пĕтĕçтерме, медицина пулăшăвĕ парас меслетсене халăх хушшинче çуралса аталанма май панă. Халăх медицинин авалхи чылай меслечĕсем, тĕрлĕрен улшăнусем тӳссе, хальхи куна çитиех упранса юлнă. Сăмахран, ӳпке чирĕнчен сывалма халăх медицини сĕтпе пĕçернĕ купăста çиме хушать. Кунта çакă паллă: чĕрĕ купăстапа сĕтре кальци тăварĕ нумай иккен. Ӳпке чирĕнчен сыватма медицина та хлорланă кальци ирĕлчĕкĕ евĕр кальци тăварĕ сĕнет. Мĕн ĕлĕкренпех чĕре чирĕнчен, гипертонирен сывалма, сурана сиплеме халăх медицини «шур курăкĕпе» усă курнă. Тĕпчесе пăхнă хыççăн акă мĕн палăрнă: «шур курăкĕнче» чăн та гипертонипе, чĕре чирĕпе чирлесен юн тымарĕсене сарма пулăшакан япаласем пур, унта А витамин та çителĕклĕ, вăл сурана хăвăртрах пирчеме пулăшать. Варвиттипе аптрасан, чăвашсем типĕтнĕ çĕмĕрт шывне вĕретсе ĕçеççĕ, научнăй медицина та унпа çаплах усă курать, мĕншĕн тесен унта каяша хытаракан япала пур. Ромашкăпа (шур чечекпе), юман хуппипе, женьшеньпе эмеллесси малтан халăх медицининче пуçланса кайнă.

Халăх медицинин опычĕпе сăнавĕсем тем пекех пуян пулин те, ăна наука тĕлĕшĕнчен тĕрĕс теме çук, мĕншĕн тесен вăл усă куракан сыватмалли меслетсем наукăлла пĕлӳсем çинче никĕсленсе тăмаççĕ, вĕсем — ăнсăртран тупнăскерсем. Унсăр пуçне, халăх медицининче ĕмĕрсем хушши усă курнă эмеллемелли япаласем хальхи вăхăтра чылайăшĕ хăйсен пĕлтерĕшне çухатнă. Вĕсен вырăнне ку чухнехи научнăй медицина шухăшласа тупнă чылай пахарах майсемпе усă кураççĕ. Чăн та, юнлă варвиттинчен сыватма халь пирĕн химилле чаплă препаратсем (фталазол, сульгин, синтомицин, левомицедин) пур çĕртенех мĕн тума кишĕр сĕтекĕпе аппаланас-ха? Е тата

сивчире хирĕçле бигумаль, акрихин, плазмоцид евĕр хăватлă препаратсем пур чухне мĕншĕн армути йӳç шывĕпе чăрманмалла? Юлашкинчен, рак шыççинчен хăтăлмашкăн пĕр-пĕр курăк е палан çырлин сĕтекĕпе сиплешсе вăхăта сая яма кирлĕ те мар. Ун вырăнне, пĕр минут вăхăта усăсăр тăккаламасăр, çав чире хирĕç ку чухнехи çакнашкал хăватлă майсемпе — радипе, рентген пайăркисемпе е касса операцилесе — кĕрешме тытăнмалла. Халăх медицинин пуянлăхĕнчен чи пахисене уйăрса илмелле, вара вĕсемпе сыватмалли учрежденисен кулленхи ĕçĕнче анлăн усă курмалла — çакăн пек ĕнтĕ медицина умĕнче тăракан задача.

Тĕрлĕрен юмăçсем, вĕрӳçĕсем, курăксемпе сиплештерекенсем халăх медицини ячĕпе витĕнсе пурăнаççĕ, хăйсем вара халăхăн эмеллемелли меслечĕсене тăтăшах пăсаççĕ. Унсăр пуçне, тата вĕсем вĕрсе-сурса, тухатса хăтланаççĕ. Вĕрӳ-суру, тухату йĕрки этемлĕхĕн чи авалхи обществинчех пуçланса кайнă.

Таврари тĕнче пирки фантазилле шухăшласси малтанхи обществăри çынсем çутçанталăкри инкек-синкексемпе, унăн вăйĕпе кĕрешме пултарайманнинчен килнĕ. Малтанхи çынсем, чир-чĕр тата çутçанталăкри ытти явленисем пуçланса кайнине ăнлантарма тăрăшса, çутçанталăкри кирек хăш япала та ăс-тăнпа шухăшлама пултарать тата кашни явлениех ăс-тăнлă пĕр-пĕр япала ирĕкĕпе пулса иртет, тесе шутланă. Çапла вара, юханшыв çиленет те, унăн çыранĕсем сарăлса каяççĕ пулать; хĕвелпе пĕлĕт ырă та, усал та пулма пултараççĕ имĕш. Малтанхи этем тата акă мĕнле шутланă: чула чулпа шаккасан, вăл вут хĕлхемĕ кăларма пултарать, апла пулсан, этемрен çĕршер хут вăйлăрах пĕлĕт çинчи темĕнле япала çиçĕм хĕлхемĕ кăларать.

Çавăн пек ĕнтĕ малтанхи этем ăнланăвĕнче çутçанталăкри турăсем, пирĕштисем, усал тата ырă сывлăшсем çуралнă. Чир лекесси çын ӳтне усал сывлăш кĕрсе вырнаçнинчен килет, тенĕ. Вăрах вăхăт хушши çынсем çапла шутласа пурăннă. «Язычество» тĕнĕн йăли-йĕркисене тытса пурăнакан чăвашсем чир-чĕр ересси пĕр-пĕр хăватран килет тесе шутланă. Кӳн пирки çак сăлтавсене кăтартмалла: тĕн-тĕшмĕшне ĕненекен хресченсем шутла-

нă тăрăх, киремет — усал сывлăш. Инкек-синкек, чир-чĕр, выльăх мурĕ, типĕ çанталăк унран килнĕ. Киремет уйрăм вырăнсенче пурăнать, ун пек вырăнсем кашни ялтах пур. Çынсем киремете пуççапнă, ун ячĕпе тихасем, путексем пуснă, пăтă пĕçернĕ. Çав ĕçе тума уйрăм çынсене суйланă, вĕсем хăйсем те çынсем çине чир-чĕр яртарма пултарнă имĕш. Киремете выльăх пусса парнелессине çуркунне туса ирттернĕ, унсăр пуçне, чăвашсем киремет пурăнакан вырăнсене ахаль чухне те вак укçа, апат-çимĕç (çăкăр, пăтă) илсе пынă, çапла туса, вĕсем киремете йăпатасшăн, ун кăмăлне тивĕçтересшĕн пулнă.

Христос тĕнне йышăннăранпа чăвашсем чир-чĕр сăлтавĕ çине мĕнле пăхасси ытла палăрмаллах улшăнман, анчах чир-чĕр ярас хăват халь киреметрен Христос тĕнĕн туррисем çине куçнă.

Чир-чĕр яракан иккĕмĕш хăват йĕрĕх пулнă, вăл пĕр-пĕр уйрăм чир яма пултарнă, сăмахран, ӳт-пӳ çине тухакан кĕсен йĕрĕхрен килнĕ имĕш. Кĕсен ерсен, йĕрĕх тытнă, тенĕ чăвашсем. Йĕрĕхе парнесем кӳрессине уйра е вăрманта мар, ялта туса ирттернĕ: хуралтă витти айне тĕрлĕ тĕслĕ хăюсем çакса янă.

Чир-чĕр сăлтавĕ текен виççĕмĕш хăват вĕри çĕлен пулнă, вăл пуринчен ытла ăс-тăн чирĕ ертет, унсăр пуçне вăлах ӳпкене суранлатма пултарать тесе ĕненнĕ. Час-часах çӳлтен метеорит персе аннине вĕри çĕлен тесе каланă, аннă чухне атмосферăра çунса кайнипе юлакан вут-хĕм йĕрне хӳри тесе каланă.

Чир-чĕр сăлтавне тĕшмĕш хресченсем арçури иртĕхнипе те çыхăнтарнă, вăл çынна чăлах туса хăварма пултарать тенĕ.

Çын çилли тивнĕрен, куç ӳкнĕрен чирленĕ тени те усал сывлăш хăвачĕпе чирленĕ майлăрахах пулнă. Çынна чир-чĕр ертес хăват уйрăмах юмăçăн вăйлă тесе ĕненнĕ. Сăмахран, алла, хула е пĕр-пĕр урăх вырăна юмăç сĕр-тĕннĕ пулсан, çав вырăн ыратма тытăнать. Çав юмăççем чир-чĕре парăнтарма та пĕлеççĕ имĕш.

Хирĕç вăрăнни, е ăншăрт ӳкни, çавнашкал чир-чĕре сывăх тăрать. Çынсем пĕр-пĕринпе хирĕçеççĕ пулсан, çиллисене пула вĕсем хăйсем кăна мар, çав çилĕ пырса тивнипе тепĕр ют çын та чирлесе ӳкме пултарать. Ун пек чухне вар-хырăм ыратать, хăсăк тухать тесе ĕненнĕ.

Çапла вара, чăвашсен, ытти халăхсенни пекех, чир-чĕр ерессин тĕп сăлтавĕ усал сывлăшсем шутланнă.

Çавна май авалхи çынсен, усал сывлăша хăваласа кăларса, чир-чĕртен сывалмалли меслет пуçланса кайнă. Пĕр йышши халăхсем ăна пушăпа хăваласа кăларнă, теприсем — тискеррĕн ташласа, юрласа, виççĕмĕшсем — инструментсемпе шав тунă, хăратнă, чирлĕ çын çине сурнă, йÿçĕ япаласем панă. Сывмар çыннине мĕнешкел йывăр, йĕрĕнчĕклĕ, ун ăшĕнчи усал сывлăша та çавнашкалах тесе шутланă. Усал сывлăша хăваласа кăларас е унран сыхланас тĕлĕшпе вĕрни-сурни те çав майпах пуçланса кайнă. Вĕрÿ-суру йĕркипе сиплештерне чухне тăтăшах курăксемпе усă курнă, анчах кунта çав курăксенче чир-чĕртен мĕн чухлĕ те пулин усăллă япала чăн та пуррине вĕрÿçĕсем шута илмен, вĕсем çав курăксенче пĕр-пĕр асамлă хăват пур тесе шутланă. Халăх хушшинче çÿрекен юмах-сăмахсенче каланă тăрăх, юмăçсем, тухатмăшсем курăксем пăшăлтатнине, калаçнине ăнланаççĕ, вĕрÿ-суру чĕлхипе усă курса, хăватлă шыв тума пĕлеççĕ.

Патша Российинче юмăçсем, тухатмăшсем йышлă пулнă. Вĕсем халăха «сиплес» ĕçе анлăн хутшăннă, ăна пусмăрласа пурăннă. Акă пĕр тĕслĕх кăна: патша вăхăтĕнче «сиплес» ĕç валли çурçĕр енче пурăнакан халăхран шамансем çулталăкра хĕрĕх пин таран пăлан пуçтарнă, кунсăр пуçне, тискер кайăксен хаклă йышши тирне нумай пухнă. Хăшпĕр чирсене «сипленĕ» çĕрте юмăçсем усă куракан меслетсем нумай чухне сывлăхшăн куçкĕретĕнех пит сиенлĕ пулнă. Акă, сăмахран, ÿтри суран çине вĕсем сурăх çăмĕ, йÿçĕхнĕ сĕт, чĕрĕ купăста çулçи, табак хунă. Хуçăлнă е мăкăлтаннă пулсан, шăмă сыпăкĕсене, хуçăкĕсене майлаштарса вырнаçтармасăрах çыхса лартнă, ун хыççăн пăшăлтатса тухатнă. Ÿт-тир пиçсе кайсан е шăнса пăсăлсан, тин тухнă чăх тислĕкĕпе усă курнă, юна чармалла пулсан, çын ăнланма пултарайман сăмахсем каласа сÿпĕлтетнĕ.

Чăваш юмăçисем чечче чирне тиха тислĕкĕн тухатнă шĕвекĕпе «сыватнă». Шăтан-юхан (золотуха) чирне сиплемешкĕн çу сĕрнĕ, вара йытта çулаттарнă, тепĕр чухне йытă юн тухиччене тăрăшнă. Юмăç, çав вăхăтра йытă пуçĕ çинчен çăм пайăрки касса илсе, ăна хăйăпа тиверт-се çунтарнă, вара кĕлне суран çине тухатса сапнă. Унтан та тăрлавсăртараххи пулнă: пилĕк ыратсан, ашшĕ-амă-

шĕн пĕртен-пĕр хĕре сывмар çын çурăмне таптама хушнă. Хирĕç вăраннипе аптранă çынна хирĕçекенсен аллирине çунă шывпа сыватнă. Сарра кайнă çынна чăваш юмăçĕсем çапла сипленĕ: саркайăка çичĕ хутчен шыва кĕртнĕ, вара çав вараланчăк шыва сывмар çынна ĕçтернĕ. Çак асăннă тĕслĕхсем мĕн тери айван та килĕшӳсĕр пулни каламасăрах паллă ĕнтĕ.

Нише кайнă ачана чустапа сĕрнĕ, вара ăна виçĕ хутчен вĕри кăмакана кĕртсе кăларнă, ун хыççăн чустине йытта панă, çав вăхăтра тухату е кĕлĕ сăмахĕсене каланă.

Революци пуличчен чăвашсен «сыватмалли» меслечĕсем мĕнле пулнине тĕплĕнтерех çутатса пама вĕсен хăшпĕр ĕненĕвĕсемпе йăлисем çинче кăштах чарăнса тăмалла. Акă, сăмахран, чирлĕ çын кĕпе-йĕм улăштарса тăхăнсан е çăвăнсан, чиртен сывалнă хыççăн вĕрĕлет (тепĕр хут чирлет), тесе ĕненнĕ. Çавăнпа вара чирлĕ çынсем кĕпе-йĕм улăштарма е ваннăпа усă курма хирĕçленĕ, вĕрĕлетпĕр, тесе шутланă.

Тĕрĕссипех каламалла: чăваш юмăçисемпе ал-ура лартакансем хушшинче уйрăмлăх пулнă. Юмăçсемпе танлаштарсан, ал-ура лартакансем халăха пысăк усă кӳнĕ, вĕсем мăкăлтаннă, вырăнтан сикнĕ шăмă сыпăкĕсене вырнаçтарса лартнă. Çакăнпа пĕрлех тата вĕсем халăх медицинин меслечĕсемпе усă курнă, вĕрӳ-суру чĕлхипе е кĕлĕ каласа аппаланман. Сывмар çынна сипленĕ чухне юмăçсем çыннăн ăс-тăнĕ урлă хăйсен вăй-хăвачĕ, пултарулăхĕ иккĕленӳсĕр пулнине ĕнентерме тăрăшнă. Тухату сăмахĕсене калани гипноз тунине аса илтерет. Юмăç тухату сăмахĕсене вĕçĕмрен пĕр евĕрлĕ пăшăлтатса калать, çветтуйсен ячĕсене асăнать, пӳртре сасă кăларма чарать, хăйĕн япалисемпе тем-тем хăтланать, тухату чĕлхипе вăрттăн, çын ăнланман сăмахсем калать, юлашкинчен, сывмар çынна çветтуй шывпа çăвать. Сывмар çынна хăй чĕрĕлессине ĕнентерсе, юмăç тепĕр чухне — уйрăмах суранлă вырăна касса илсе операци тумалла чухне — питех те сиен кӳрет. Ку вăл усал шыçă чухне тата ытларах хăрушă.

Чирлĕ çынна пĕлсе, тĕрĕс, ăнăçлă сиплес тесен, чи малтанах вăл мĕнпе чирленине пĕлмелле, урăхла каласан, диагноз лартмалла. Çак ĕçе, паллах, юмăç пачах тума пултараймасть.

Нумаях пулмасть Ростов облаçĕнчи Песчанокопски ялта П. В. Шеховцева юмăçăн сиплемелли «меслечĕсене»

тӑрӑ шыв ҫине кӑларнӑ, вӑл хӑй патне пулӑшу ыйтма пыракан ҫынсене 9 литр эрех ҫинче сулема (хӑватлӑ наркӑмӑш) ирӗлтернӗ хутӑш панӑ. Ун «эмелӗпе» сиплешекенсем час-часах вилнӗ, мӗншӗн тесен сулема пӳрене, тӗп нерва системине тата апат-ҫимӗҫ шӑратакан органсене питӗ хытӑ сиен кӳрет.

Чирлӗ ҫынсене тӗрлӗ йышши аферистсем, шарлатансем «сипленӗ» тӗслӗхсем пирӗн республикӑра та пур. Акӑ, сӑмахран, Тӑвайран инҫех мар Кӗршери чиркӳ священникӗ Деоментий Николаевич Миллин (чиркӗве ҫӳрекенсем ӑна Деоментий атте теҫҫӗ) темиҫе ҫул хушши «шуйттанран тасатса» пурӑннӑ. Ҫакна тунӑ чухне вӑл Смоленскри «турӑ амӑшӗн» турӑшӗпе усӑ курнӑ. Сывмар ҫынна чиркӳ урайне вырттарнӑ, чир ертекен шуйттанран тасатас тесе, ӑна ҫав турӑш кӗтессипе пусса хӗстернӗ. Шуйттан кӗрсе ларнӑ сывмар ҫын хырӑмне турӑ амӑшӗн сулмак турӑшӗпе пусса хӗстерсен кӑна шуйттан тӳсеймест, кӗленче пӑкки пек сирпӗнсе тухать, вара чир ҫавӑнтах иртет, чирлӗ ҫын чӗрӗлет имӗш. Малтанлӑха Деоментий атте ҫынсене пӗчченшерӗн «сыватнӑ», каярахпа вара ку ӗҫе лайӑхлатса ҫӗнетнӗ те, чӑрмавӗ сахалтарах пултӑр тесе, шуйттансене пӗр харӑсах темиҫе ҫын ӑшӗнчен хӑваласа кӑларма тытӑннӑ. Ҫавнашкал сиплениcем усӑ мар, сиен кӑна кӳресси паллах ӗнтӗ. Анчах сахал ӑнланулла ҫынсен пуҫӗсене Деоментий атте минретнӗ, вӗсен чирӗсене тухтӑрсем сыватма пултараймаҫҫӗ тесе ӗнентернӗ. Ҫавӑнпа ӗнтӗ вӑл хӑй патӗнче сывалакансене ҫак ӗҫ ҫинчен никам умӗнче те ҫӑвар уҫма хушман. Анчах атпӑрине михӗре пытарса усрама ҫук! Деоментий аттене тӑрӑ шыв ҫине кӑларнӑ.

Чӑваш республикинчи хӑшпӗр тутар ялӗсене Тимергалей ятлӑ ҫын тӑтӑшах кӗрсе ҫӳренӗ. Тӗне ӗненекенсем ӑна Тимергалей-мулла вырӑнне йышӑннӑ, ӑна «хазрат» (ҫылӑхсӑр ҫын) тесе шутланӑ, тӗрлӗрен чирсенчен хӑтӑлма унран пулӑшу ыйтнӑ. Сыватасса вара ҫак Тимергалей тӗлӗнмелле меслетпе сыватнӑ. Куславкка районӗнчи Кармӑш ял ҫынни Рахимзян-абзый хӑйӗн тытамак тытакан ывӑлне сыватма сӗннӗ. Тимергалей, сыватнӑшӑн тесе укҫа илнӗ те, Рахимзяна Тутар республикинчи Хасан ҫветтуй вилтӑпри ҫине кайса, унта ҫӗр каҫма хушнӑ. Чӑннипе вара, Тутар республикинче нимӗнле Хасан ҫветтуй вилтӑпри таврашӗ те ҫук. Тимергалей нумай ҫынсене эрех ӗҫессинчен пӑрахтарма пулнӑ. Вӗсенчен укҫа илнӗ,

вёсен умёнче кёлё калана, çапах та çынсем эрех ёçме пăрахман. Çав вăхăтрах вăл хăй тупнă укçипе ёçсе ӳсёрёлсе çӳренё. Çавнашкал ёçпе Тимергалей чылайранпа аппаланнă пулнă. Малтан вăл Тутар республикинчи Зеленодольск хулинче «ёçлесе пураннă», анчах унăн унта намăс курма тивнё, ăна тăрă шыв çине кăларнă та, халăх «кара-мулла» * тесе чёнме пуçланă. Чăваш республикинче те çав намăсах курма тӳрё килнё ăна.

Сёмсёр шарлатансемпе аферистсем, турра ёненекенсен тёттёмлёхёпе усă курса, пёр-пёр çăлкуçёнчи шыва «сиплё» е «çветтуй шыв» тесе пёлтерни çинчен калакан тёслёхсене пичетре сахал мар илсе кăтартнă. Массăсене турра ёнентерес тесе, чиркӳ çыннисем тăварсăр, уйрăмах минераллă шывсемпе усă курнă, усă кураççё те, çавнашкал шывсене вёсем вăрттăн хăватлă е çветтуй шывсем тесе пёлтерессё. Сăмахран, Рязань облаçёнчи Шацки районёнчи Черная слобода ялёнче «Григорий атте» тенскер çынсене тата выльăхсене сыватмашкăн — мёнле чирпе чирленине пăхмасăрах — пусăри шыва аллăшар тенкёлле сутнă. Шывне вара, ăрăмçăлла сăмахсем каласа, ладăн татăкёсем янă.

1959 çулччен пирён республикăри Улатăр районёнчи Миренки ялё çывăхёнчи «çветтуй» çăл патне халăх çӳренё. Çав çăлăн «хăвачёпе» вырăнти чиркӳ совечён хăшпёр членёсем тата укçа тума пёлекен шарлатансем усă курса, тёне ёненекенсене улталаса, çаратса пураннă. Паллах, «çветтуй» шыв никама та чир-чёртен сыватма пултарайман, çăлри сивё шывпа шыва кёнё хыççăн нумай çынсем чирленё. Чиркӳ уявёсем вăхăтёнче Миренки халăхё 2—3 кун хушши ёçмелли шывсăр тăрса юлнă. Çав кунсенче халăх ёçсе ӳсёрёлнё, япала çухаласси те ытларах вăйланнă. Ёççыннисем ыйтнине тивёçтерсе, Улатăр райёçтăвкомё çав çăл патне халăха çӳреме чарасси çинчен решени йышăннă.

Çавăн пекех Шупашкар районёнчи Ишек чиркӳ ишёлчёкёсем патне те Микул туррăн «тёлёнмелле хăватлă» турăшне асăнма халăх çӳренё. Вырăнти власть органёсем халăха унта çӳреме чарнă хыççăн, чиркӳ пулнă вырăнта стадион тусан, халăх çав тёле пуççапма çӳреме

---

* Хура чунлă пăсăк çын.

пărахнă. Анчах вырăнти аферистсем укçа тупмалли çămăл меслете çав-çавах вĕçертесшĕн пулман, вĕсем çав чиркÿ çывăхĕнчи çăл щывне сиплĕ тата вăл çветтуй шыв тесе пĕлтернĕ, халь каллех турра ĕненекен тĕттĕм çынсем тĕрлĕрен чир-чĕре сиплештерме çав шывпа усă курнине тĕл пулма пулать. Вырăнти власть органĕсем çывăх вăхăтрах халăха çав çăл патне çÿреме чарасса шанас килет.

Научнăй медицина минераллă çăлкуçĕсенчи шыв çын сывлăхĕшĕн усăллă пулнине йышăнать. Анчах та çавăн йышши çăл шывĕсен сиплĕхĕ вĕсем çветтуй шывĕ е тĕлĕнмелле вăй-хăватлă пулнинчен килмест, вăл çав шывсенче минераллă япаласем пулнинчен тата вĕсен радиоактивноçĕнчен килет. Боржомири, Ессентукинчи т. ыт. çĕрти минераллă шывсемпе, нарзанпа шыçнă сурансенчен, гастритран, холециститран сывалнă чухне ăнăçлăн усă кураççĕ. Сероводоротлă, кăмрăк йÿçĕклĕ газлă, радонлă минераллă шывсемпе чĕре чирĕсене тата нерв системине сипленĕ чухне ванна туса усă кураççĕ. Вĕсен сиплĕхĕ мĕн чухлĕ пуласси çав шывсен минераллă япалисемпе радиоактивноçĕ вар-хырăм органĕсемшĕн, чĕрепе юн тымарĕсемшĕн тата нерв системишĕн мĕн тери усăллă пулнинчен килет.

Мĕншĕн хăшпĕр чухне çынсем пулăшу ыйтма юмăçсем патне каяççĕ-ха? Мĕншĕн тесен ун пек çынна хăйĕн чирĕ уйрăм йышши чир пулнăн туйăнать, апла ăна йăлт урăхла, тухтăрсем пĕлмен уйрăм меслетпе сиплемелле, тесе шутлать вăл. Çавнашкал сусăр çынсем вара юмăçăн «тĕлĕнмелле вăрттăн» меслечĕсемпе усă курма васкаççĕ. Хăшпĕр çынсене юмăçсем тепĕр чух хăйсен пациенчĕсене сывлăхлă тунă пек туйăнать. Ку ĕнтĕ хăйсемех иртме пултаракан чирсенчен сывални çеç. Юмăç хăй патне çÿрекен сывмар çынсене тĕрлĕрен япала ярса вĕретнĕ шĕвек йÿçĕкĕсем ĕçме, сĕрме хушать, вара сываласси çинчен пĕлтерсе калать. Калăпăр, юмăç патне чĕрепе аптранă çын пынă. Юмăç ăна шăк вăйлă юхтаракан шĕвек ĕçме тата сахалтарах ĕçсе çиме, ытларах вырăн çинче выртма, сахалтарах хумханма (хальхи юмăçсем çак канашсен пĕлтерĕшĕсене питĕ лайăх пĕлеççĕ) хушать, çакăнпа пĕрлех пĕр-пĕр çунатлă та ăшă сăмахсем («ман курăкăм сан чире шăпăрпа шăлнă пек хÿтерсе кăларĕ») каласа, сывмар çыннăн кăмăлне çĕклентерсе ярать. Сывмар çын юмăç каланисене пĕр пăркаланмасăр пурнăçласа пырать,

вăл панă шĕвексене ĕçет, сĕрет, хайхи чир чăн та иртет. Сывмар çын хĕпĕртет, çакăн çинчен кашнине каласа парать. Акă сывмар çын ĕçе пуçăнать, анчах ун чĕри каллех начарланать, каллех ыратма тытăнать, тапхăр-тапхăр вăйлăрах та ыратать. Анчах та хăш сывмар çын хăй тепĕр хут аптраса ӳкни çинчен пaçăрхи пек хавхаланса халь каласа парĕ-ши вара?

Юмăçсен ăнăççăр ĕçĕсем çинчен çынсем шарламасçĕ, анчах ăнсăртран сывални пулсан, ун пек хыпар вара таçти-таçти таврана хăвăрт сарăлать, çавна май тивĕçлипе илмен мухтав кураççĕ те ĕнтĕ вĕсем. Анчах юмăç «сыватни» яланах сиен кăна кӳрет, мĕншĕн тесен чирлĕ çын хăйĕн чирне сыватмасăр вăраха ярать, çийĕнчех пур майсемпе те сыватма кирлĕ хаклă вăхăта сая ярать. Çавăнпа юмăçсем, тухатмăшсем сипленине Совет государстви преступлени тесе сивлет.

## ТĔШМĔШСЕМ ÇИНЧЕН

Хăшпĕр тĕшмĕшсем мĕн тери тăрлавсăр пулни ахалех паллă, вĕсене тăрă шыв çине кăларма та кирлех мар. Çул татса каçса кайнă кушак е мулкач нимĕнле инкек-синкек те кӳме пултарайманни çинчен уйрăммăн ăнлантарса тăма кирлех-ши вара? Ку ахалех паллă. Салтăнма, хывăнма яланах сулахай урараи пуçласан, нихçан та шăл сурмасть, е тата сарра кайнă чиртен сывалас тесен, чĕрĕ çăрттан пулла алла тытмалла та вăл çывăрса кайиччен ун çине пăхса тăмалла тенисем те çавнашкалах айванла. Паянхи кунччченех хăшпĕр çынсем куçкĕски çĕмĕрĕлсен çын вилет тесе шутлаççĕ, çак тĕшмĕш авалхи çынсем хăйсен ӳкнĕ сăнне е мĕлкине ватни çав çынна вĕлерессипе тан тесе ĕненнинчен пуçланса кайнă. Паллах, кунта нимĕнле чăнлăх та пулма пултараймасть.

Наука «телейсĕр» вунвиççĕмĕш хисепе тĕшмĕшле ĕненесси ăçтан пуçланса кайнине интереслĕ ăнлантарса парать.

Хăшпĕр хисепсене çынсем мĕн авалтанах уйрăм пĕлтерĕшлĕ тесе шутланă. Уйрăмах 12 хисеп паллă пулнă (пĕлĕт çинче çăлтăр ушкăнĕ вуниккĕ, апостолсем вуниккĕ, çулталăкра вуникĕ уйăх т. ыт. те). 12 хисеп 2, 3, 4, 6 çине пайланать, çавăнпа авалхи çынсен шут йĕрки дюжинăллă — вуниккĕллĕ пулнă. Шут йĕркинче вăл чăн та килĕшӳллĕ вырăнта тăнă, 12 хыççăн çĕнĕ йĕрке пуçланса кайнă, 12 çумне единица хушсан пулакан 13 хисеп шут-

лама майсăр пек туйăннă, вăл пĕр хăй çине çеç пайланнă, хăнăхса çитнĕ дюжина йĕркипе шутлассине пăтраштарнă. Çакна пула ĕнтĕ 13 хисепе начар хисеп тесе шутлама, ун çинчен тем те пĕр путсĕр сăмах-юмах шухăшласа кăларма май панă. Юлашкинчен, 13 хисепе «шуйттан дюжини» («чертова дюжина»), инкек-синкек кӳрекен хисеп тесе шутланă.

Нумай тĕшмĕшсем чир ернипе, вилнипе, ача çуралнипе, ăна пăхса ӳстерессипе çыхăнса тăнă, вĕсем тĕне ĕненекенсем хушшинче ытларах сарăлнă.

Тĕшмĕшлĕ çынсем нумай чир-чĕршĕн таса мар хăвата («нечистая сила») текеннине айăплаççĕ. Тĕне ĕненекен çын чир-чĕре турă наказанийĕ, хăйĕн шăпи тесе шутлать. Мĕн пулмалли пулатех тесе пурăнакан çын шучĕпе, прививка туни те, ытти асăрханулла мелсем те, турă пӳрнĕ пулсан, чир-чĕр ерессинчен пурпĕрех хăтарма пултарайманçĕ пек туйăнать, вара вăл ĕççыннисен сывлăхне сыхласа хăварас тĕлĕшпе туса ирттерекен ĕçсенчен пăрăнса юлма тăрăшать. Хăйне ернĕ чир усал сывлăшран килет тесе шутлаканскер, тĕшмĕшлĕ çын хăй ăшĕнчи усал сывлăша хăваласа кăлармашкăн юмăç патне каять.

Тĕне ĕненекенсен çакнашкал шухăш-кăмăлĕсене тĕн çине тăрсах хӳтĕлет, тĕн сĕрĕмĕшĕн тăрса, этемлĕхе хирĕçле пысăк айăпсем туни те пулкалать. XVIII ĕмĕр вĕçĕнче Англи врачĕ Эдуард Дженнер чечче ересрен сыхлакан прививка тумалли мел шыраса тупнă. Çак çитĕнĕвĕн пĕлтерĕшĕ калама çук пысăк пулнă. Пĕр Европăра кăна чечче чирĕпе çулсерен çур миллиона çити çын вилнĕ, чеччене пулах çĕршер пин çын суккăрланса юлнă. Наукăра хăй тунă çитĕнĕве тĕрĕсе хурса йышăниччен чиркĕвĕн реакциллĕ вăйĕсене хирĕç кĕрешсе çĕнтермелле пулассине Дженнер питĕ аван ăнланнă, çавăнпа вăл чĕрĕ çынсене çирĕм çул хушши прививка туса тĕрĕсленĕ хыççăн тин хăй сăнанă ĕçсен результачĕсене пичетлесе кăларнă. Чеччене хирĕçле прививка туни усăллă иккенне курсан, иккĕленӳлĕх майĕпен сирĕлсе пынă. Чиркӳ, чирчĕр вăл — этемлĕх çылăхĕсемшĕн янă «турă наказанийĕ» тесе ĕнентерекенскер, Дженнер тунă çитĕнӳ тĕн вĕрентĕвне хавшатать тенĕ, çавăнпа чеччене хирĕçле прививкăна хирĕç хаяр кĕрешӳ пуçарса янă. XIX ĕмĕрĕн çирĕммĕш çулĕсенче XII Лев папа ятарласа кăларнă буллара чечче ересрен прививка туни «турă хушнисене хирĕçле ĕç» тесе пĕлтернĕ. Пупсем чиркӳ кафедрисем çинчен

чечче —«халăх çылăхĕсемшĕн турă янă суд», чечче ересрен прививка туни çӳлти турă халăха наказани парас ирĕклĕхе пӳлет, тесе вĕрентнĕ. Чиркӳ çыннисем хушнă тăрăх, чечче чирĕ сарăлассине чарса лартмашкăн çӳлти турра кĕлтуса каçарттармалла имĕш. Совет Союзĕнче Вăтам Азири республикăсен мусульман духовенстви те чеччене ересрен прививка тăвассине питĕ хирĕç пулнă, анчах халăх прививка тунин уссине ĕненнĕ, вăл духовенство хыççăн кайман.

Медицина науки çапла шутлать: çынна чир-чĕр бактерисем, вируссем, вĕтĕ кăмпасем урлă ерет е вăл пурнăç условийĕсем япăх пулнинчен килет (апатланни, шăнни, ĕçри условисем т. ыт. те). Чирĕн сăлтавне шута илсе, унран сыхланмалли тата сывалмалли тивĕçлĕ мерăсем туса ирттереççĕ.

Сăмахран, уртаракан чир вирус ятлă микроорганизмсенчен килнине медицина науки татăклăн кăтартса панă. Пирĕн организма вĕсем урнă чĕрчунсем çыртсан лекеççĕ. Уртаракан чир епле ерни паллă пулнăран çав чирпе кĕрешмелли меслетсене те шыраса тупнă. Чăн та, халь уртаракан чире хирĕç кĕрешмелли хăватлă та паха вакцина пур, урнă чĕрчун çыртсан та, вăл çынна чирлеме памасть. Литературăра Луи Пастер уртаракан чире хирĕç кĕрешмелли вакцина тупнă малтанхи кунсенчех урнă кашкăр çыртнă 18 вырăс хресченĕн пурнăçне вăл çăлса хăварни çинчен калани пур. Нимĕнле юмăç та хăйĕн курăкĕсемпе, асам чĕлхипе уртаракан чиртен сыхласа хăварма пултараймасть.

Сикекен чирсене пула патша Российинче мĕн чухлĕ çын вилсе пĕтмен-ши? Ун чухнехи вырăс ялĕнче сикекен чир-чĕре хирĕç, юмăç тата тухатмăш меслечĕсемпе усă курса, мĕнле ăнăççăр кĕрешнине В. Маяковский «Чирлесен, ни турă, ни ултавçă-юмăç сана нихçан та ырă тумĕç» сăввинче çырса кăтартнă. Ялта чечче чирĕ алхасать. Хресченсем чечче чирĕнчен хăтăлас шутпа, тĕшмĕшле меслетсемпе усă курса, тем те туса пăхаççĕ: тухатнă шывпа усă кураççĕ, тĕрлĕ шăв-шав кăлараççĕ, çухăрашаççĕ, турра кĕлтăваççĕ т. ыт. те.

Анчах та чир çаплах хаяр,
Тулсах,
тулсах пырать масар...
...Çапла хăтланнă вăхăтра
Шăп вуннăшне хуплать тăпра.

...Анчах та — ак тӗнче!—
Тармасть, пӗтмест чечче.
Ахаль иртмерӗ мыскара,
Сарсах,
сарсах пырать вӑл масара.

Октябрьти Аслӑ революци хыҫҫӑн пирӗн ҫӗршывра чечче, шатраллӑ тиф тата ытти сарӑлакан чирсене пӗтернӗ. Холера чирӗ пуррине 1927 ҫулта, чечче чирӗ пуррине 1938 ҫулта юлашки хут палӑртнӑ.

Вӗсем вӗрсе-сурса тухатнипе пӗтнӗ-ши вара? Паллах, ҫук.

Научнӑй медицина ҫав чирсен чӑн-чӑн сӑлтавӗсене шыраса тупнӑ та, ҫавна шута илсе, вӗсемпе кӗрешме халӑх хушшинче прививкӑсемпе, вакцинӑсемпе усӑ кураҫҫӗ.

Кирек мӗнле тӗн те наукӑран уйрӑм, идеалистла вӗренӳ ҫине — ҫын икӗ пайран, чунпа ӳтрен, тӑрать тесе вӗрентни ҫине — таянса тӑрать, «вилӗмсӗр чун» ӳтрен маларах, ӳт «ҫав чун йӑви» кӑна пулса тӑрать имӗш.

Чун пуррине ӗненни сиенлӗ нумай йӑласем патне илсе пынӑ. Кам илтмен пулӗ усал куҫ ӳкнӗ тенине? Ӗлӗк, кӑкӑр ачине кам та пулсан мухтасан, савӑнас вырӑнне амӑшӗ: «Ывӑлӑма куҫ ан ӳктӗрехчӗ. Тьфу, тьфу, тьфу — куҫ тухтӑр!»— тенӗ. Асламӑшӗпе мӑнукӗ мунчаран таврӑнаҫҫӗ пулсан, хӑшпӗр чухне хӗрача пичӗ ҫинче хӑрӑм йӗрӗ пулнӑ. Мӗнле-ха апла — мунчаран ҫӑвӑнса тухнӑ пулсан та, питре хӑрӑм? Асламӑшӗ мӑнукне, куҫ ӳкесрен, юри хӑрӑм сӗрсе янӑ иккен.

Ӗлӗкхи ҫынсем чир-чӗр куҫ ӳкнӗрен ерет тесе шухӑшланӑ. Ҫак «пултарулӑх» юмӑҫсен, усал та киревсӗр ҫынсен пулать тенӗ. Куҫ ӳкессине ӗненни чун куҫсенче пурӑнать тесе шутланинчен пуҫланса кайнӑ. Акӑ, сӑмахран, индуссем чун куҫ шӑрҫи ӑшӗнче пурӑнакан пӳрнеске пысӑкӑш ача тесе шутланӑ. Усал сывлӑш пурӑнакан куҫлӑ ҫын куҫ ӳкерме пултарать, урӑхла каласан, тепӗр ҫын ҫине пӑхсан, ҫав ҫыннӑн чунне илме пултарать, вара ҫав ҫын начарланма тытӑнать те пурпӗрех вилет имӗш.

Нимӗнле тӗн те вилӗмсӗр чун пурри ҫинчен каламасӑр хӑварма пултараймасть. Тӗн вӗрентнӗ тӑрӑх, ҫын вилни вӑл — ун чунӗ ӳтӗнчен уйрӑлни пулса тӑрать. Вилнӗ хыҫҫӑн ҫын ӳчӗ саланать, чунӗ турӑ патне вӗҫсе каять те, унта тарасасем ҫинче унӑн ырӑ тата усал ӗҫӗ-

сене виçсе пăхаççĕ, ун хыççăн чун е çăтмаха, е тамăка лекет. «Леш тĕнчери» тамăкра çылăхлисене хĕртнĕ çатма çинче ăшалаççĕ, вĕресе тăракан сăмала ăшне чикеççĕ т. ыт. те. Çăтмахра вара таса чунсем валли ĕççыннисем çĕр çинче курман мĕнпур ырлăхсене хатĕрлесе хунă пулать. Тĕне ĕненекенсем çапах чун ăçта вырнаçнă пирки нимĕнле те пĕр-пĕринпе сăмах татаймаççĕ. Пĕрисем вăл ўпкепе парка юн тымарĕсем тата чĕре хушшинче çўрет теççĕ, теприсем вăл пуç мимин мăкăрĕнче теççĕ, виççĕмĕшсем вăл чĕрере е юнра тесе шутлаççĕ. Этемĕн чăнчăн телейне тĕн çĕр çинчи пурнăçра курмасть. Пурнăç вăхăтлăх кăна, унти савăнăç ултавлă. Çыннăн çĕр çинчи пурнăçĕ пирки сахалтарах шухăшламалла, унăн хăй чунне çăласси пирки тăрăшмалла. «Пурнăç тĕллевĕ» пирки вĕрентсе калакан проповедьсем те пур, унта калаиă тăрăх, пурнăçăн тĕллевĕ Христос тата çўлти Ханаан, урăхла каласан, леш тĕнчери пурнăç пулса тăрать. Çавнашкал вĕрентсе каланисем çынна пăтраштарса яраççĕ, нихçан пулман леш тĕнче çинчен шухăшлаттараççĕ. Тĕн çынна пурнăçран, пĕтĕм халăх ырлăхĕшĕн активлăн тата ăнланса ĕçлессинчен пăрса ярать, ун вырăнне çыннăн мĕнпур ĕçне-хĕлне хăйне çăлассишĕн тутарма тăрăшать.

Совет материалистла физиологийĕпе психологийĕ чун тата çыннăн ăс-хакăлĕ пирки тĕн вĕрентсе каланисене аркатса тăкрĕ. Вăл çын организмĕнче нимĕнле уйрăм чун та, нимĕнле уйрăмла «пурнăç хăвачĕ» те çуккине кăтартса пачĕ. Çакна çын вилсен темиçе сехетрен ун чĕрине ĕçлекен туса кăтартнă опытсем куçăмлăн ĕнентереççĕ. Çапла акă, 1902 çултах вырăс ученăйĕ Кулябко профессор ўпке чирĕпе вилнĕ ачан чĕрине касса кăларнă та 20 сехетрен ăна ĕçлекен тунă. Совет тĕпчевçи С. Е. Андреев вилнĕ ача чĕрине 96 сехет иртсен ĕçлекен тунă. Тен, çапла çĕнĕрен ĕçлекен тума чĕрене анчах пулать? Тен, наука опычĕсем чун чăнахах чĕрере вырнаçса тăнине кăтартса параççĕ? Çак ыйтусем çине ответлеме медицина пĕр чĕрчунăн организмĕнченех касса илнĕ тĕрлĕ органсене çĕнĕрен чĕртнине кăтартакан нумай тĕрлĕ опытсем илсе парать. Сăмахран, вилнĕ чĕрчунăн пыршă татăкне касса илсе, юн составне çывăх ирĕлчĕке (Рингер составĕ текенскере) ярсан, вăл чĕрĕ организмри пекех авкаланать, кĕскелет. Тĕн шучĕпе, пĕтĕм организмпа пĕрле чĕрчунăн е çыннăн уйрăм пайĕсем те пĕр харăсах вилеççĕ пулать. Наука çакă тĕрĕс мар пулнине ĕненте-

рӳллӗн кӑтартса парать. Пачах урӑхла, ҫын вилнӗ хыҫҫӑн темиҫе сехетрен те унӑн тӗрлӗ органӗсемпе тканӗсем — чӗре, пыршӑлӑх, тир, чӗрнесем, ҫӳҫсем — чӗрӗ чухнехи паллӑсене пурне те кӑтартма пултараҫҫӗ.

Ҫавӑнпа вара виличчен яп-яка хырса янӑ сухалпа мӑйӑх е каснӑ чӗрнесем вырӑнне вӗсем ҫӗнӗрен ӳссе ларнинчен тӗлӗнмелли нимех те ҫук. Халь совет медицини чӗрене ҫеҫ мар, ҫыннӑн пуҫ мимине те, унӑн мӗнпур организмне те ҫӗнӗрен чӗртсе ярса ӗҫлеттерме пултарать. Юлашки ҫулсенче Сталинла преми лауреачӗ В. А. Неговский профессорпа ытти совет ученӑйӗсем ҫынна клиникӑлла вилӗм хыҫҫӑн, организмра каялла таврӑнми процессем пуҫланиччен, чӗртмелли майсемпе средствӑсем тупнӑ. Ҫын вилсен — унӑн ӑсӗ-тӑнӗ ҫухалать, чӗре ӗҫлеме чарӑнать, ҫын сывламасӑр выртать, анчах, артерине юн ярса, малтанхи 5—6 минут хушшинче, чӗрене, ӳпкене, пуҫ мимине ҫӗнӗрен ӗҫлеттерсе, ҫынна тепӗр хут пурӑнакан тума пулать. Ҫын клиникӑлла вилнӗ хыҫҫӑн 8—10 минутран пуҫ миминчи нерв клеткисенче кислород ҫитмен пирки каялла тавӑрма ҫук процессем пуҫланса каяҫҫӗ, ҫавӑнпа ҫынна тепӗр хут чӗртме май ҫук.

Клиникӑлла вилнӗ хыҫҫӑн тепӗр хут чӗрӗлнӗ ҫынсем халь ӗнтӗ ҫӗршер шутланаҫҫӗ.

Юн ярас ыйтусем пирки пулса иртнӗ пӗтӗм тӗнчери конференцире ҫавӑн пек чухне юн ярасси пирки хирӗҫ калакансемпе те пулнӑ.

Юн ярас ыйтусене сӳтсе явма пухӑннӑ пӗтӗм тӗнчери конференцире пӗр буржуалла «ученӑй» ҫавӑн пек чухне юн ярассине «татӑклӑн хирӗҫлесе» каланӑ, мӗншӗн тесен ку «христианство чун ҫинчен вӗрентнине» хирӗҫлет иккен. Делегат юн ярассине пӗтӗмӗшле хирӗҫленӗ, мӗншӗн тесен библире ҫапла каланӑ: «Кирек кам чунӗ те унӑн юнӗ пулса тӑрать»,— тенӗ.

Хальхи вӑхӑтра Неговский профессор чӗрчунсене клиникӑлла вилнӗ хыҫҫӑн 30 минут иртсен те чӗртет. Ҫав чаплӑ ҫитӗнӳсемпе сывӑх вӑхӑтрах практикӑлла медицинӑра та усӑ курма тытӑнасса шанма пулать.

Ку чухнехи медицина ҫитӗнӗвӗсене ҫын вилнӗ хыҫҫӑн 4—5 кун иртсен те чӗрӗлсе тӑни ҫинчен тӗн ҫӳретекен сӑмах-юмахсемпе пӑтраштарма кирлӗ мар. Органсемпе тканьсене тата пӗтӗм организмах ҫӗнӗрен чӗртни ҫинчен калакан опытсем пирки тӗн мӗн калать-ха? Тӗне ӗненекенсем шутланӑ тӑрӑх, ҫын вилни унӑн чунӗ ӳтӗнчен уй-

ӑлнине пӗлтерет. Апла пулсан, вилнӗ ҫынна чӗртме пултаракан врач унӑн чунне ӳчӗ ăшне каялла илсе килмелли меслет тупнӑ теме пулать. Апла пулма пултарайманни кашни ҫыннăнах паллӑ ӗнтӗ.

Анчах та, ҫыннӑн чунӗ ҫук пулсан, ӑс-хакӑл процесӗсене мӗнле ăнлантарса памалла-ха, тесе ыйтма пултарасҫӗ. Вырӑссен аслӑ физиологӗсем Павловпа Сеченов, психикӑлла процессене тӗн идеалистла ӑнлантарнине сирсе ярса, ҫын шухӑшлама пултарасси турӑ панӑ чунран мар, пуҫ мими тытӑмӗнчен килет тесе ӑнлантарнӑ. Утрен уйрӑм нимӗнле чун тавращӗ те ҫук. Шухӑш, туйӑм, ӗмӗт текен психикӑлла явленисем — нерв системин ӗҫӗнчи чи аслӑ орган пулса тӑракан пуҫ мимин функцийӗсем. Пуҫ мими — ҫынпа чӗрчунӑн чи кирлӗ органӗ. Пуҫ мими пулмасан, хускалма та, курма та, илтме те, калаҫма та, шухӑшлама та пултараймастпӑр.

Ҫыннӑн нерв системин тытӑмӗ мӗнле-ши? Ҫыннӑн психикӑлла ӗҫӗсене тӑвакан органӗ пуҫ мимин малти пайӗ, ҫурри, тӗрӗсрех каласан, ҫурҫӑмӑрсен ҫиелти сийӗ пулса тӑрать, вӑл мимеллӗ ҫӳхе сийлӗ хӑйне майлӑ япала, унта 15 миллиарда яхӑн клетка шутланать. Ҫурҫӑмӑрсен сийӗнчи кашни пайӗ хӑйӗн ӗҫне тӑвать: пӗри сасӑсене илтме пулӑшать, тепри — шӑршӑ туйма, виҫҫӗмӗшӗ — тӗссене уйӑрма т. ыт. те. Пӗр тӗрлӗ клеткӑсем — хусканӑва, теприсем шалти органсен ӗҫне йӗркелесе тӑраҫҫӗ. Пуҫ тата ҫурӑм мимисенчен питӗ йышлӑ нервӑсем каяҫҫӗ, ӳт-пӗвӗн мӗнпур органӗсене пырса кӗреҫҫӗ, ҫапла майпа вӗсем мимерен «приказсем» тата органсенчен мимепатне сигналсем ямалли ҫул пулса тӑраҫҫӗ.

1864 ҫулта вырӑс физиологин никӗсне хываканӗ И. М. Сеченов «Пуҫ мимин рефлексӗсем» ятлӑ ӗҫне пичетлесе кӑларнӑ, унта вӑл пуҫ мими ӗҫӗн тӗп форми рефлекторлӑ ӗҫ пулнине кӑтартса панӑ. Прогресс тӑшманӗсем Сеченовӑн ҫак кӗнекине кӑларма чарнӑ, ӑна «материализм катехизисӗ» тенӗ. Пичет ӗҫӗн тӗп управленийӗ цензура комитетне ҫапла пӗлтернӗ: «Сеченов кӗнекине, материалистла чи ҫивӗч теорисене ҫырса кӑтартаканскере, пӗтерсе лартассине... кирлӗ тесе йышӑннӑ. Ҫак материалистла кӗнеке, шухӑшлӑх ирӗклӗхӗпе чун вилӗмсӗр пулнине хирӗҫлекенскер, христианствӑпа килӗшмест. Асӑннӑ кӗнекене арестлес тата суда парас». Петербург митрополичӗ ҫапла вӗрентнӗшӗн «Сеченов профессор гос-

подина лăплантарма тата тӳрленме Соловецк монастырьне» яма сĕннĕ.

Пуç мимин ĕçĕ рефлекссем çинче никĕсленсе тăнине И. П. Павлов çирĕплетсе панă тата вăл ăна пур майлă та ăнлантарса кăтартнă. Çав рефлекссенчен хăшпĕрисем, условнăй маррисем, çыннăн çуралнă чухнех пулаççĕ. Сăмахран, тин çуралнă ача кăкăр ĕмме пултарать, тин кăна çăмартаран тухнă кăвакал чĕппи шывра ишме пултарать. Условнăй мар рефлекссем е инстинктсем йăхран йăха куçса пыраççĕ. Павлов условнăй рефлекссем пуррине кăтартса панă, шухăшлани, тĕпрен илсен, çав рефлекссем çинче никĕсленсе тăрать. Условнăй рефлекссем организма тулашри тавралăхпа вăхăтлăха çыхăнтарса тăраççĕ, вĕсене пула организм хамăр таврари тĕнчепе яланах пĕрлĕхлĕ пулать, унти улшăнусемпе майлашса, килĕшсе тăрать.

Çын ăс-тăнĕнчи кирек хăш процесс та нерв системинче хăйне майлă улшăну тăвать, мимере хăйне майлă биохимилле тата биофизикăлла процессем пулса иртеççĕ. Шизофрени, эпилепси, вĕри чир йышши психикăлла йывăр чирсем пуç мимин çиелти сийĕнче биохимилле тата биофизикăлла улшăнусен результачĕсем пулса тăраççĕ, ун пек чухне нерв клеткисем тулашран тапратни çине тĕрĕс те тивĕçлĕ рефлекспа ответлеме пултараймаççĕ.

Сăмахран, нерв клеткисем эрех нумай ĕçнĕ хыççăн вăйлă сиенленнипе пулакан вĕри чир (белая горячка) вăхăтĕнче çыннăн ăсĕ-пуçĕ мăкалать, çывăрайми пулать, куçне умра çук хăратакан тем те пĕр япаласем (юмахсенчи усал-тĕселсем, йĕкехӳресем, шăшисем, шуйттансем) курăнаççĕ. Тепĕр чухне, ытлашши хăранă хушăра, тискер сасăсене пула, сывмар çын чӳречерен тулалла сикме хăтланать.

Наукăра тунă пысăк çитĕнӳсем тĕн хуралçисене шиклентереççĕ. Халăх хушшинче хăйсен влиянине упраса хăварас тесе, вĕсем тем тума та хатĕр. Çапла акă, XVI ĕмĕрте инквизици питĕ чаплă анатома, Андреа Везалине, çынна чĕрĕллех касса пăхнă тесе элеклесе, вут çинче çунтармалла тунă. Чăн та, 1543 çулта тухнă «Çын ӳт-пĕвĕн тытăмĕ» ятлă кĕнекишĕн чиркӳ ăна каçарма пултарайман. Везалий аяк пĕрчи шăммисем арçыннăн миçе, хĕрарăмăн та çавăн чухлех пулнине кăтартса панă, библире çырнă тăрăх, турă Евăна Адамăн аяк пĕрчи шăм-

минчен тунă пулать, апла пулсан, Адамна ун йăхĕнчи арçынсен те пĕр шăмă сахалтарах пулма кирлĕ.

Христос çĕр çине иккĕмĕш хут таврăннă чухне, чиркӳ вĕрентнĕ тăрăх, хаяр суд умне тăма «вилнисем тупăкĕсенчен чĕрĕлсе тăмалла». Чĕрĕлсе тăрасси «çĕрмен» шăмă татăкĕ юлнăран пулать. Везали нинпер виле касса пăхнă, анчах пĕринче те çĕрмен турă шăмми тупайман. Çапла майпа вăл вилнĕ çын чĕрĕлесси пирки калакан тĕн вĕрентĕвне тăрă шыв çине кăларнă. Везали тунă çак çĕнĕ çитĕнӳсем Христос тĕнĕн тĕп вĕрентĕвĕсене хавшатнă, çавăнпа ĕнтĕ католикла чиркӳ ăна пуçĕпех пĕтерме шутланă.

V Карл корольпе унăн II Филипп ятлă ывăлĕ ун хутне кĕнине пула, вут çинче çунтарас вырăнне Везалине Палестинăри «таса» вырăнсем патне кайса пуççапма хушнă, анчах та каялла таврăннă чухне аслă анатом карап çинчи инкеке пула вилнĕ.

Наукăра тунă çитĕнӳсемшĕн православи чиркĕвĕ те çаплах тискерле хăтланнă. Православи чиркĕвĕ уйрăмах врачсене курайман, мĕншĕн тесен вĕсем, христианство тĕнĕн вĕрентĕвĕсене хавшатнипе пĕрлех, духовенствăна кансĕрленĕ: укçаран тăранма пĕлмен пупсем, тĕрлĕ чирчĕре сыватанçи пулса, хăйсем тупăш нумай курнă.

III Иван патша вăхăтĕнче, «усал-тĕселпе çыхăну тытать» тесе, Антон Эрренштейн врача вут çинче çунтарса янă. IV Иван чухне, «тухатланăшăн» тесе, Бомелий врача пурана хупса çунтарса янă.

XIX ĕмĕрĕн пуçламăшĕнче Хусан вĕренӳ округĕн попечителĕ Магницкий анатоми музейĕнче студентсем «турра хирĕçле» ĕç тăваççĕ тесе каланă, мĕншĕн тесен анатомине вĕреннĕ чухне вĕсем вилнĕ çын ӳт-пĕвне касса пăхнă, анатоми препарачĕсемпе усă курнă. Çавăнпа Магницкий анатоми музейĕн препарачĕсене çĕр чавса пытарма тата çын ӳт-пĕвне касса пăхассине чарса лартма хушнă. Хусан университечĕн анатоми музейĕнчи пуян коллекцисене çĕр чавса пытарнă, вара студентсем çын ӳтпĕвĕн тытăмне ӳкерчĕксем тăрăх вĕренме тытăннă. Çапла хăтланнă тĕн фанатикĕсем наукăна аталанма чарас тесе. Халĕ те-ха чиркӳ хăшпĕр чухне çынсене хăратма пикенет. Акă, сăмахран, 1929 çулта Ульяновскра Михайловский хирурга вилнĕ çынсене юн ярса чĕртме хăтланнăшăн вĕ-

лёрнĕ. Вăл «шуйттан чури» пулса тăнă тесе, ăна хăйĕн фанатикла арăмех вĕлерне. Экспериментальнăй физиологин институтне çырусем пыма пуçланă, çав çырусенче йытăсене çĕнĕрен чĕртес тесе тăвакан опытсене тума малалла та чарăнмасан, пĕлĕт çинчи вăйсем врачсене пурпĕрех тавăраççĕ, тесе хăратса çырнă.

## КУЛЛЕНХИ ПУРНĂÇРИ ТĔШМĔШСЕМ

Тĕшмĕше ĕненни час-часах йăнăш, кирлĕ мар, сывлăхшăн сиенлĕ ĕçсем тăвасси патне илсе çитерет. Тепĕр чухне йывăр чирленĕ хăшпĕр çынсем, вырăн çине выртмасăр, чире ура çинчех ирттерсе яма тăрăшаççĕ. Чире парăнмасан, вăл хăех иртет, вырăн çине выртсан, чир пĕр тăхтамасăрах ураран ӳкерет, тесе шутлаççĕ вĕсем.

Çавăн пек шухăшлакансенчен Н. В. Гоголь «Ревизор» комедире тăрăхласа кулать. Унти пĕр персонаж çапла калать: «Мĕн тума кирлĕ эмел тавраше? Кама сывалма пӳрнĕ — сывалать, кама вилме пӳрнĕ — вăл хăех вилет».

Паллах, нихçан та шартах хăраса ӳкме кирлĕ мар, кирек мĕнле чирпе чирлесен те, кăмăла хуçмалла мар, анчах тивĕççĕр «паттăрланма» та кирлĕ мар, ура çинче çӳресе, çав-çавах ĕçе тухса, чир çине алă сулни килĕшӳсĕр. Йывăртарах кирек мĕнле чир чухне те канăçлă пурăнма тăрăшмалла.

Апатланасси пирки те тĕрлĕрен шухăшлакансем тĕл пулаççĕ. Хăшпĕрисем апат мĕн чухлĕ çуллăрах, вăл çавăн чухлĕ усăллăрах, тесе шутлаççĕ. Кашни çыннăн апатлану рационĕнче апат-çимĕçе кĕрекен япаласем (белоксем, çусем, углеводсем) хисепĕ енчен тĕрĕс шайлă пулмалла, вĕсенчен пĕри ытлашши е çителĕксĕр пулни яланах сиенлĕ.

Вăтам вăй хурса ĕçлекен çыннăн апат-çимĕç составĕ çапла пулмалла: белоксем 100 грамм, çусем 50—60 грамм, углеводсем 500—600 грамм. Хăшпĕр çынсем ыраш çăкăрне çиесшĕн мар, шурă çăкăр усăллăрах тесе шутлаççĕ. Чăннипе илсен, çын организмне кирлĕ витаминсем лайăх пĕçернĕ ыраш çăкăрĕнче ытларах, çавăнпа хура çăкăр та çимелле.

Хĕрарăм сывлăхне йывăр çын пулнă тата ача çуратнă вăхăтпа çыхăннă тĕрлĕрен тĕшмĕшсем пысăк сиен кӳреççĕ. Ача çуратма йывăр пулсан, пуп патне кайса, чиркӳ алăкне уçтармалла, тесе шутланă. Йывăр çыннăн пĕкĕ

урлă каçма юрамасть — ачи курпун пулать имĕш т. ыт. те. Ача çураттаракан эпи карчăксем чыслă пулман, аллисене çуса тасатман, çавна пула юн пăсăлма пултарнă, тĕрлĕрен шыçу чирĕсем пуçланнă. Чăваш хушшинчи эпи карчăксем ача çураттарнă чухне хĕрарăма пӳлĕм тăрăх уттарса çӳретнĕ, хăй çӳçне çăвара чиктернĕ, хĕрарăма хăйне е упăшкине тĕвĕ салттарнă. Тепĕр чухне упăшкине арăмĕ урлă каçма хушнă, темĕнле йышши курăкпа «сиплештернĕ». Ача çуратасси вăраха тăсăлсан, эпи карчăксем хĕрарăма вĕри мунчана илсе кайнă, ку ĕнтĕ хĕрарăма хăйне те, ăшри ачине те пысăк сиен кӳме пултарнă. Çакнашкал хăтланни мĕн тери киревсĕр пулни каламасăрах паллă ĕнтĕ.

Ача çуратнă чухне хĕрарăма пулăшмашкăн пирĕн медицина питĕ тăрăшать. Йывăр хĕрарăмсем валли ача çуратмалли çуртсем, хĕрарăм консультацийĕсем темĕн чухлех уçнă, хĕрарăмсем хушшинче ăнлантару ĕçне анлăн туса пыраççĕ. Çапах та хăшпĕр хĕрарăмсем, уйрăмах ялта пурăнаканнисем, çав-çавах кивĕ йăласене пăрахаймаççĕ-ха. Ачана килте çуратни ачана та, амăшне те пысăк сиен кӳме пултарнине пăхмасăрах, вĕсем килти условисенче çăмăлланма тăрăшаççĕ. Ун пек чухне юн нумай кайма тата пăсăлма пултарать, маткăпа ун таврашĕнчи пайсем пăсăлма пултараççĕ. Час-часах ача вилĕ çуралать. Йывăр çын чухне те ӳт-тир шыçса тăртанма, юн пусăмĕ хăпарма, шăнăр туртма пултарнине асра тытса, кашни хĕрарăмăнах уйăхра пĕрре хĕрарăм консультацине çӳремелле. Пирĕн çĕршывра ача çуратмалли çуртсемпе акушерсен пункчĕсем йышлă чухне ачана килти условисенче çуратни питех те килĕшӳсĕр.

Ача-пăчана, уйрăмах кăкăр ĕмекен пĕчĕк ачана, пăхса ӳстерессипе çыхăннă тĕрлĕрен тĕшмĕшсем ку таранччен сыхланса юлнă-ха. Çамрăк хĕрарăма тĕрлĕрен ăс паракансем сахал мар, çав шутрах тĕшмĕшле канашсем те ун хăлхине пырса кĕреççĕ. Хăшпĕрисем ачан вар-хырăмĕ пăсăласран амăшне чĕрĕ пахча çимĕç, çырла çиме хушмаççĕ. Тĕрĕссипе каласан, пахча çимĕçпе çырласенче витаминсем нумай, вĕсем кăкăр сĕтне витаминсемпе пуянлатаççĕ. Витаминсем çамрăк организма аталанма, ӳсме кирлĕ. Кăкăр сĕчĕ сахаллансан, ача амăшне сăра, укроп янă чей ĕçме хушаççĕ, анчах вĕсем сĕт антарма нимĕн чухлĕ те пулăшмаççĕ. Пачах урăхла: сăра-эрех таврашĕ кăкăр сĕтне куçать те ача сывлăхне сиенлетет.

Чăваш ялĕсенче халь те карчăксем хăйсен пĕчĕк мăнукĕсене уйăх тултарнă-тултарманах çăкăрпа сахăр чăмласа хыптарнине курма пулать. Ку питех те начар йăла. Çыннăн çăвар ăшчикки чи таса мар вырăнсенчен пĕри шутланать. Унта чир-чĕр микробĕсем пурăнаççĕ. Чăмлакпа пĕрле вĕсем ачан организмне лекеççĕ те йывăр чирлеттереççĕ. Ку çеç те мар-ха,— ултă уйăх çитиччен çамрăк ачана кăкăр сĕчĕсĕр пуçне урăх нимĕн те çитерме юрамасть.

Сикекен чир ернĕ ача-пăчана пăхнă чухне те тĕшмĕш йăлисем тĕл пулаççĕ. Сăмахран, хĕрлĕхен ернĕ сывмар ачана амăшĕсем тĕттĕм çĕрте вырттармалла тесе шутлаççĕ, шыва кĕртме, çума юрамасть теççĕ. Ку тĕрĕс мар. Сывмар ача-пăчана таса та çутă пӳлĕме вырттармалла, унта сывлăш уçă пулмалла, ӳт-тире таса тытмалла, чир йывăра каясран асăрханмалла.

Хăшпĕр ача амăшĕсем хĕрлĕхенпе кашни ачанах чирлесе иртмелле, хĕрлĕхен — çăмăл чир тесе шутлаççĕ. Вĕсем, çемьере пĕр ачи чирлесен, ăна ыттисенчен уйăрмаççĕ, юри пĕрле усрама тăрăшаççĕ. «Хĕрлĕхен, пĕрне ернĕскер, пурне те ертĕр, капла çăмăлтарах»,— тесе шутлаççĕ ун пек хĕрарăмсем. Тĕрĕссипе каласан, хĕрлĕхенпе кашни ачанах чирлесе ирттерме кирлĕ мар, çавăнпа та ача-пăчана унран çине тăрса сыхламалла.

## ТĔН ЙĂЛИСЕМ СИЕН ÇЕÇ КӲРЕÇÇĔ

Тĕрлĕ тĕшмĕшсем пекех, тĕн йăлисемпе уявĕсем те халăх сывлăхне пысăк сиен кӳреççĕ.

Сăмахран, христиансен те, мусульмансен те типĕ тытас йăла пур. Христиансем типĕ тытнă вăхăтра аш-какай, сĕт, аш çăвĕ ăша ямаççĕ, ӳсентăрантан пулнă апат-çимĕç кăна çиеççĕ. Аш-какайра тата ытти выльăх-чĕрлĕх продукчĕсенче пирĕн клеткăсемпе тканьсем валли кирлĕ чи паха белоксем нумай. Аш-какай белокĕнче организма кирлĕ мĕнпур аминокислотасем пур, вĕсемсĕр пуçне япаласем кирлĕ пек улшăнаймаççĕ, нерв тата мышца клеткисем кирлĕ апат илсе тăраймаççĕ, йĕркеллĕ аталанаймаççĕ. Унсăр пуçне аш-какайра тата ытти выльăх-чĕрлĕх продукчĕсенче (усламçура, шăннă çура, пĕверте) организма кирлĕ урăх япаласем те пур: PP витамин (никотинлă кислота), А, В витаминсем. Витаминсем уйрăмах пĕверте нумай. Çавăнпа вăрах вăхăт хушши аш-какай çимесен,

тĕрлĕрен чир-чĕр пуçланса кайма пултарать. Сăмахран, организмра РР витамин — никотинлă кислота çителĕксĕр пулсан, пеллагр ятлă йывăр чир аталанма пултарать. Çыннăн тăнĕ чакать, апат-çимĕç çулĕ пăсăлать, çын ырханланса каять. Çакна организма никотинлă кислота янипе çăмăллăнах ирттерсе яма пулать. А, В витаминсем çителĕксĕррине кăтартакан йывăр паллăсем те пулма пултараççĕ.

Апат-çимĕçре паха белоксем пулмасан, организм начарланать, сикекен тĕрлĕ йышши чирсем (грипп, пыр шыççи, ӳпке шыççи, фурункулез) часах ереççĕ, çын вĕсене йывăр иртерсе ярать. Çакăнтан пирĕн организм сикекен чирсемпе кĕрешмелли паха витаминсенчен антитела текен япаласем туни курăнса тăрать. Организмра паха белоксем çителĕксĕр чухне антителăсен хисепĕ сасартăк сахалланать, çакăнпа пĕрлех организмăн хӳтĕленес хăвачĕ те чакать.

Мусульмансен ураси те çавăн йышши йăлах пулса тăрать. Тĕне ĕненекен мусульмансем çулла пĕр уйăх хушши хĕвел тухса хĕвел анса лариччен апат çимеççĕ, çĕрле кăна апатланаççĕ. Çапла вара, апатпа апат хушши 20 сехет ытла пулать. Тĕн çыннин çав хушăра пĕр çăвар шыв сыпма та юрамасть. Ураса тытни вар-хырăма, пыршăлăха йĕркеллĕ, кал-кал ĕçлеме чăрмантарать, çавăнпа апат-çимĕç ирĕлтерекен органсем пăсăлма, чирлеме пултараççĕ. Вăрах вăхăт иртнĕ хыççăн апата нумай çинине пула вар-хырăм сарăлса каять, усăнса анать, хырăмлăх тирĕ çӳхелет, çавăн пирки вар-хырăм сĕтекĕ те сахалтарах тухать. Малалла апат çимĕç начар ирĕлекен пулать, гастрит пуçланать, юлашкинчен вара хырăмлăх араслан-са кайса шыçакан пулать.

Христос тĕнне тытакансем хушшинче хĕресе чуптăвас йĕрке паллă вырăн йышăнса тăрать. Чиркӳри хĕресе сывă çынсемпе пĕрле сывмаррисем те чуптăваççĕ, çавăнпа та хĕрес урлă чир-чĕр сарăлас хăрушлăх пысăк. Ерекен чирлĕ çынсенчен хĕрес çинче чир-чĕр саракан микробсем, вируссем ерсе юлаççĕ. Хĕресе сывă çын чуптусан, вĕсем тутасен сывлăш çулĕн йăлмака сиййĕсене çыпăçса лараççĕ те, вара çын туберкулез, сифилис, грипп, дифтерит тата ытти йышши сикекен чирсемпе чирлеме пултарать.

Мусульмансем туйра пурте пĕр кашăкпа ăсса пĕр тирĕкренех пылак шыв ĕçеççĕ, пĕр тутăр татăкĕпех тута-

çăвара шăлаççĕ. Ку та хĕресе чуптăвас пекех сывлăхшăн сиенлĕ йăла.

Нумай йăласемпе тĕн йĕркисене палăртнă чухне çынсем эрех тавраш ĕçеççĕ, ку халĕ те алкоголизма сарăлма пулăшать-ха. Сăмахран, акă, ача çуралнă, ăна шыва кĕртнĕ ятпа, туйра, пумилккере, вилнĕ çынна çĕре чиксен, чиркӳ праçникĕсенче яланах ĕçкĕ-çикĕпе аппаланаççĕ.

Алкоголизм ĕнтĕ революциччен ĕççыннисене хаяррăн пусмăрланине пула, сӳсленичче ирĕксĕрлесе ĕçлеттерние пула, пушă вăхăта культурăллă ирттерме условисем пулманнине пула сарăлнă. Ĕлĕк пусмăр тӳссе пурăннă рабочисемпе хресченсем ĕçсе ӳсĕрĕлсен, хăйсен нушаллă пурнăçĕ çинчен пĕр вăхăтлăха манса кайнă. Капиталистсем алкоголизмпа кĕрешме шутламан, алкоголизм сарăлни пĕр енчен вĕсемшĕн усăллă пулнă, мĕншĕн тесен вăл ĕççыннисен массисене хăйсен пурнăçне лайăхлатассишĕн кĕрешес çултан пăрса яма пулăшнă.

Октябрьти социализмлă аслă революци капитализм стройне татăклăнах пĕтерсе лартрĕ, çавна пула алкоголизма сарăлма пулăшакан условисем те юлмарĕç. Чухăнлăхпа ĕçсĕрлĕх хыçа тăрса юлчĕç, тĕн никĕсĕсене те тĕпренех хавшатнă, халăхăн культурăлла шайĕ калама çук ӳссе кайрĕ, кĕнеке, радио, кино, театр совет çыннисен кулленхи пурнăçне анлăн кĕрсе вырнаçрĕç. Çапла ĕнтĕ, совет çыннин сăн-сăпачĕ тĕпренех улшăнчĕ.

Çапла пулин те, эрех ĕçсе ашкăнакансем пирĕн çĕршывра халĕ те пур-ха. Çак вăл пирĕн условисенче кивĕ пурнăçран юлнă сиенлĕ йăла пулса тăрать.

Алкоголизм чĕрепе юн тымарĕсене, çавăнпа пĕрлех мĕнпур организма та вăхăтсăр ватăлтарать. Алкоголь ĕçекен çыннăн организмне кăна мар, çав çын ĕçлесе пурăнакан коллектива та питĕ пысăк сиен кӳрет. Алкоголизм çемьене, производствăна, пĕтĕм обществăна çав тери сиенлет, çавăнпа çав инкекпе пĕтĕм вăя хурса кĕрешмелле.

## ЮЛАШКИНЧЕН КАЛАНИ

Çын сывлăхĕшĕн сиенлĕ тĕн йăлисем, тĕшмĕшсем çинчен татах та каласа кайма пулатчĕ. Қашни кун каласа ăнлантарса, пирĕн обществăри кая юлнă элементсене çутта кăларса, çав япаласемпе татăклăн кĕрешмелле.

Пирĕн çĕршывра социализм тунă чухнехи çитĕнӳсене пула халăхăн тĕп массисем тĕн тĕшмĕшĕсенчен, йăлисенчен тасалчĕç. Коммунистсен партийĕпе Совет правительстви тăрăшнă пирки тĕн тĕшмĕшĕсемпе йăлисене пачах пĕлмен çĕнĕ ăру çуралса ӳсрĕ. Анчах та пирĕн хушăра тĕн тĕшмĕшĕсемпе йăлисем йăлтах пĕтсе ларнă тесе шутлани тĕрĕс пулман пулĕччĕ. Паянхи кунччenех тĕне, тĕрлĕрен тĕшмĕше, юмăçа, тухатмăша ĕненекенсем те çук мар-ха. Аçта-ха ĕнтĕ çакăн сăлтавĕ? Капитализмăн çав паллисем мĕншĕн вăрахчен сыхланса юлаççĕ-ха?

Унăн сăлтавĕсем нумай. Çынсен ăс-тăнĕ вĕсен экономикăллă аталанăвĕнчен юлса пырать. «Тĕн идеологине, тĕшмĕшсене çын ăс-тăнне ĕмĕрсем хушши кĕртсе пынă, миллионсен, вуншар миллионсен йăлисем — вĕсем чи хăрушă вăй»,— тенĕ В. И. Ленин. Тĕшмĕшсене нумайăшĕ йăлана, традицине кĕнĕрен çеç ĕненеççĕ.

Социализм тунă чухне эпир нумай япаласене капитализм тĕнчинчен илнине те шута илмелле. «Кивĕ общество пĕтсе ларнă чухне ун виллине тупăк ăшне хурса шăтăка чикме çук. Вăл пирĕн хушăра çĕрет, çĕрнĕ чухне çав виле шăрши пире хамăра та пырса тивет»,— тенĕ В. И. Ленин.

Капитализм юлашкисем пулса тăракан тĕшмĕшсем, тĕн йăлисем социализм тапхăрĕнче хăйсем тĕллĕнех вилсе пĕтмеççĕ, вĕсене хирĕç ывăна пĕлми, çине тăрса кĕрешмелле, мĕншĕн тесен вĕсем çутçанталăкпа общество çинчен наукăна хирĕçле вĕрентӳсем сараççĕ, халăха наукăна алла илме чăрмантараççĕ, çынсене хăйсен вăй-халĕ çине шанăççăрла пăхма хăнăхтараççĕ, халăхăн творчествăлла сарлака çулĕ çинчен айккинелле тĕртсе яраççĕ.

КПСС Центральнăй Комитечĕ «Халăх хушшинче наукăлла-атеистла пропаганда туса пырас ĕçри йăнăшсем çинчен» йышăннă постановленире çапла асăрхаттарнă: наукăлла-атеистла пропаганда ĕçĕнче тĕп вырăна çутçанталăкпа обществăри чи кирлĕ явленисем çинчен, сăмахран, çут тĕнче тытăмĕ, çĕр çинче пурнăç тата çын пуçланса кайни, медицина, хими, биологи тата ытти наукăсенче тунă çитĕнӳсем çинчен ĕнентерӳллĕ ăнлантарса парассине хумалла, тенĕ.

Çак задачăна пурнăçлама наукăпа тĕн çинчен, юмăçсемпе ку чухнехи медицина çинчен, И. П. Павловăн физиологилле вĕрентĕвĕ çинчен, çĕр, ун çинче пурнăç пуçланса кайни çинчен, çын пурнăçĕпе вилĕмĕ çинчен наука тата

тĕн мĕнле вĕрентнисем ҫинчен докладсемпе лекцисем ирттерни пулăшать.

Хăшпĕр юлташсем ҫапла шутлаҫҫĕ: наука вĕрентĕвĕсем хăйсем тĕрĕссине хăйсемех кăтартса параҫҫĕ, хĕвел системи, ҫĕр ҫинчи пурнăҫ, этем мĕнле пуҫланса кайнине пĕлсенех, тĕн саракан суя сăмах-юмаха ĕненме ҫын хăех пăрахать, тĕрĕс ҫул ҫине тухать, теҫҫĕ. Кун пек шутлани тĕрĕс мар. Тĕн саракан сăмах-юмах суя пулнине тĕплĕн каласа ăнлантармасан, вĕсем ăҫтан, мĕнле майпа пуҫланса кайнине тата вĕсен сиенлĕхне наукăллă анализ туса кăтартмасăр, наукăллă пĕлӳсем пĕр хăйсем тĕллĕн кăна тĕне ĕненекен ҫын ăс-тăнĕнче пысăк улшăну тума пултараймаҫҫĕ, усă кӳреймеҫҫĕ. Тĕнрен уйрăлнă чиркӳ ҫынни, богослови наукисен кандидачĕ пулнă Е. Дулуман ун пирки ҫапла ҫырать: «...Семинаристсем калашле, «турра ĕненмен лектора намăса хăварас тесе», эпĕ ку чухнехи наукăлла-атеистла брошюрăсем, юрăсем, лекцисем вулама тытăнтăм. Чылай брошюрăсемпе лекцисенче каланă шухăшсене сирсе яма йывăрах та марччĕ. Ку ĕнтĕ эпир туса пыракан атеистла пропаганда ҫителĕклĕ таран ĕнентерӳллĕ пулайманнине кăтартса парать».

Пирĕн социализмлă обществăра ҫынсен ăс-тăнĕнчи капитализм юлашкисене, ҫав шутрах тĕн тĕшмĕшĕсемпе йăлисене пĕтĕмпех пĕтерме кирлĕ условисемпе майсем веҫех пур. Хăй ĕҫĕн результачĕсем ҫине совет ҫынни мăнаҫлăн пăхма тивĕҫ. Ҫавнашкал пултаруллă та ĕҫчен ҫынна ниепле турă тавраш те, ниепле тĕлĕнмелле хăват тавраш те кирлĕ мар. Вăл Лебедев-Кумач калашле: «Полюс тăрăх мăнаҫлăн утать, юханшывăн ҫулне улăштарать, сăртсене шутарать те хурать — совет ҫынни халь тем те тăвать».

Тĕне тата унăн тĕшмĕшĕсемпе йăлисене хирĕҫ пропагандăна вăйлатасси, тĕттĕмлĕхе пĕтерессишĕн кĕрешес ĕҫе активлăн хутшăнасси совет ҫĕршывĕнчи ăнланулла кашни ҫыннăн тивĕҫĕ пулса тăрать.